К С(ЧУВ)
С21
34770-ЧУВ

• ПИКЕ •
БИБЛИОТЕКИ

Станислав Сатур

Чĕре хĕлĕхĕсем

Национальная библиотека ЧР
4-034770

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К с(Чув)
С 21

«ПИКЕ» библиотеки
Улттăмĕш кăларăм

Станислав Сатур

Чĕре хĕлĕхĕсем

Сăвăсем

Шупашкар — 1993 ç.

К 84.09(=4Чув)6-5
84(2Рос=4Чув)6-5

Кĕнеке спонсорĕ—«4-мĕш стройтрест» акционерлă йышăн 46-мĕш №-лĕ специализациленĕ капăрлату управленийĕ.

Станислав Сатур — тĕлĕнсе каймалла ансат, çав вăхăтрах никам пĕлми вăрттăн лирика ăсти. Унăн сăввисенче ачаш та мăнăçлă юрату ăшшине туйса тăратăн. Ку поэзин вăйĕ — ачаран чуна çывăх тăрăхри çутçанталăкпа, унти шăпчăк сассиллĕ садсемпе, анлă уй-хирсемпе, улăх-çарансемпе тата тăван халăх историйĕпе тачă çыхăнса тăнинче. Сатур хăюллă тата çĕр пекех пиçĕ те тухăçлă сăнарсем калăплать, вĕсемпе пĕрле шухăшлать, сывлать, пурăнать. «Чĕре хĕлĕхĕсем»— авторăн пирвайхи кĕнеки. Ку кĕнекене тĕрлĕ вăхăтра çырнă сăвăсем кĕнĕ.

ПРОВЕРЕНО
20 W 19 СЕН 2017

34770-Чув.
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Çăлкуç çути туртăмĕ

Вулакана

Вут чĕре — манăн ӳтĕн пин хĕлĕхлĕ пайĕ.
Çут тĕнчен кăмăл тĕкĕрĕ вăл пулнă май,
Вулаканăм, сана ырлăха илсе кайĕ,
Е туйтарĕ унти хурлăрах туйăма.

Аҫаль мар хăш чухне ют чунсем сапаланă
Çын куçне курăнман ырату хумĕсем
Тивнипе чĕтренсе янăраççĕ хӳхленĕн
Йăшкаса тăракан кăкăрти хĕлĕхсем.

Вĕсемех чи хитре кунсене те кĕç чĕртĕç.
Кулленхи тĕссĕр ваклăхсенчен хăтарса
Сана халăх кунçул-пурнăçне илсе кĕртĕç,
Хăв мал ĕмĕтлĕ, пысăк тĕллевлĕ пулсан.

Эп чĕрем юррине, вуласан çын пĕлмелĕх,
Хут çине куçарни пурнăçа тĕшмĕртме
Пулăшсассăн сана, сывлама мана меллĕ,
Телей вучĕ вĕрин пăчăртать чĕреме.

* * *

Иксĕлми чун ăшшиллĕ Çĕршывăм
Çепĕçрен тыткăнлать чĕрене.
Вĕç эс, юррăм, чăрмавсăр та сыввăн
Çак тавралăхăн çут ытамне.

Чирлĕ кăмăл мана çавăрсассăн,
Эп тимлерĕм анне сăмахне:
Çĕршыва чăнласах юратсассăн,
Нишлĕх витмĕ нихçан чĕрӳне.

Эпĕ пуш сăмахсем шырамастăп,
Вĕсем шухă, шупка пулнăран.
Тăван уй умĕнче вăтанмасăр
Пуç таятăп çеç пилĕк таран.

Чăвашстанăн хуйхи-суйхисемшĕн
Тивĕç эпĕ тытмашкăн явап.
Тӳсме тивнĕ синкерлĕ кунсемшĕн
Малашне ăна пултăр сăвап.

* * *

Ачалăхпах-çке айкашассăм килчĕ.
Каллех, ак, эпĕ унăн тĕнчинче.
Пусалăх выränĕ — мана пĕр килччĕ,
Вĕçе-вĕçе кайсан та эп инçе.

Хăш чух хама виçе виçсе хакларăм
Эп мĕнпурне чи çӳллĕ çĕрсенчен,
Анчах нихçан пĕр пĕлĕт те шумарĕ
Тăван ене хупăрласа хальччен.

Килет те кăмăл — çул çине тухатăп,
Çул çӳресе çителĕклех ырсан
Тăван килте канмашкăн чарăнатăп
Чуна сиплетĕп тейĕн курнăçса.

Ман кăмăлăм пулманччĕ-çке юнтармăш,—
Каяс килмест паян килтен инçе.
— Тăван кĕтес санран ниçта та тармĕ,—
Теетĕн-и?
Тарать — унран писсен.

Çуралнă ялăма

Ялтан эп килтĕм, килтĕм те ăнкартăм:
Сивлек ман чун, ылмашăннă пекех.
Хула хушши те уншăн халь янкарлă,
Тус-йыш та унăн çук, юлман вуçех.

Аçта-ши унăн çĕр çинчи çăтмахĕ?
Тен, ак кунтах вăл, тен, ютра?— Тăрук
Астутарать пек ваттисен сăмахĕ:
Тăван çĕршыв пек ырлăхли тек çук.

Чăнах та пуль, чăнах та...
Йывăр, йывăр
Тăван çĕре манма та пăрахма.
Эппин мана эс ӳлĕмрен те йыхăр,
Эп ӳснĕ ен, ху ырлăхна сыпма.

Çуралнă ял!
Эс — чун çути, эс — шанчăк.
Сан тараватлă кăмăлу пирки
Иккĕленместĕп, чун çапах шуйханчăк,
Ӳлет пек шухăш-кăмăл кусăрки.

Чылайранпа пурнатăп санран уйрăм,
Чылайранпа чун тăлăх, савăк мар.
Сана эп кирлĕ пулнине те туйрăм,
Анчах пӳрмен пире пĕрле пулма.

Çуралнă ял,
Мана эс каçарсамччĕ,
Анлан, анне пекех, çур сăмахран.
Сан çумăнта, ак, чунăм та тасалчĕ,
Эс пур чухне эп тухмăп çынлăхран.

Уй-хир варринче

Ĕçлетĕп хулара — ялта ман килĕм.
Хăш чух çул нушипе йăшать хевте.
Вырсарникун анчах канать ман пилĕк,
Çав кун хама сиплетĕп уй-хирте.

Ял çыннирен-ши, çирĕп тĕвĕленнĕ
Ман кăвапам çĕрпе ачалăхран.
Чунра пурришĕн çак уй-хир ĕлккенĕ
Пурнатăп йăрăрах, хаваслăрах.

Эп ӳснĕ ял хупăрлаври хăна пек:
Тухатăн та ир-ирĕн çĕкленсе —
Тырпуллă хир талккăшĕпех вăрман пек!
Çӳретĕн çил ураллăн çиçкĕнсе.

Çӳлте-çӳлте юррисемпе вĕçеççĕ
Хӳреллĕ пăнчă евĕр тăрисем.
Тырпулĕсем паркаланса ӳсеççĕ,
Выртсан — çынна чăтаççĕ пулĕ тем.

Çăра та ылтăн ялкăшу, кур, анлăн
Юхать çĕр тĕслĕ курăк тĕнчинче.
Ӳпке туллин сывлатăп та эп — калăн —
Тĕнче те ман уй-хирĕм варринче.

Тăван тăрăхра

Тарăн юрлă, ирĕклĕ уй урлă
Ут юртать, юртать пуçне ухса.
Таврара ялсем, шăналăк çурнăн,
Сĕмлĕхрен пыраççĕ пек тухса.

Уй чĕнмест. Умри ялсем те путнă
Хуйхă чухнехи пек шăплăха.
Çил-тăман çеç — е йӳçек, е тутлă —
Тĕлĕксем сĕнсе, тухма пăхать.

Пĕр сăлтав та çук пек пăлханмашкăн
Чунăма тач сывăх тăрăхра.
Йăлт кунта илемлĕ, лăпкă маншăн,
Чунăмра çапах та сăлпăран.

Ут юртать. Ут юртнă-юртнă майăн
Çуна çулĕ хывăнса юлать...
Эп çуралнă, пĕлнĕ, савнă ялăм
Юр айне пытаннăн туйăнать.

Сывпуллашу

(Салтак юрри)

Кăкăра тем хĕсет, чуна тăвăр...
...Хур карти чӳхенет шуйханса.
Тăвансемĕр, мана хисеп тăвăр,
Ярăр çу çулĕпе ăсатса.

Салтака каймалли хут эп илтĕм,
Çула тухăп мал ен вутлансан.
Ах, аннеçĕм, ан йĕр, вăхăт çитĕ,—
Кулĕп пыл çулĕпе, сыв пулсан.

Ват атте, пулĕхçе эс ан чĕнччĕ.
Кирлĕ мар пӳлĕх пилĕ мана.
Эп çуралнă енче чул та — ĕнчĕ,
Тăван ял хавха парĕ чуна.

Пĕрлĕхен пек тути савнин чĕмсĕр.
Хĕр вăтанăçĕ хупнă ăна.
Кӳр, савни, ыталам та ним тĕлсĕр
Чуптăвам асăнмалăх сана.

...Кăкăра тем хĕсет, чуна тăвăр.
Хур карти чӳхенет шуйханса...
Кайтăр, пĕттĕр тесе кам кĕл тăвĕ?—
Пурпĕрех уйрăлап хурланса.

Çĕршывăм

Мĕскершĕн салху сĕмлĕхпе эс пĕркентĕн?
Ма тăхăнтăн тăлăх тумне айванла?
Йăлтах çĕрĕхмен-ха чуна çĕклекенĕ —
Чăн пурлăх: нĕлхе, кĕнеке те йăла.

Эс курăн: савусăр сĕме пит алхапăл
Пĕр çийĕ, пĕр кăшлĕ-ха вăхăт-кĕве.
Шевлеллĕ малкурăмлăха пул эс хапăл,—
Тухать шырлантан йыхăрулла хĕвел.

* * *

Турă чурисем тем хыпарлаççĕ,
Итлемест Çĕршывĕ вĕсене.
Хӳптĕрленĕ Мур ăна хальхаççăн
Кăларса илес пекех чунне.

Эс ӳпкев те çухату, Çĕршывăм.
Хура йĕр çеç питӳнте те сан...
Умăнта камах-ши çĕлĕк хывĕ
Эс пуçна çĕре усса тăрсан.

Çĕнĕрен çĕклен эппин, тархасшăн.
Хăп-ха намăс юпинчен пĕрре.
Сан çумра темскер хускалчĕ яшăл...
Вăл — çĕлен...
Хăй канлĕн тĕлĕрет.

* * *

Пăлхар патшалăхĕн хăвачĕ
Пăчланнă, куçнă тусана.
Таса вăйсем, тен, пурăнаççĕ
Чӳк вырăнĕсенче кăна.

Имшер сăмах-юмах çеç юлчи
Сĕм авалхи хăват çинчен?

Пăлхар тени пулман-çке сулчă,
Вăй ма çук тăхăмĕсенче?

Мĕнех, халь пĕр супка алхастăр
Улшу çанталăк Чăвашра.
Кайран хăй ирĕкне Алпастă
Каллех тутарĕ-ши вара?..

* * *

Эп тăван Çĕршывпа калаçатăп,—
Вăл мана пĕр сăмахсăр тимлет.
Ку тĕнчемĕр пекех вăл хăй ватă,
Пурпĕрех чунăма илĕртет.

Эп ăна хама евĕр куратăп:
Яланах йăвашскер, мĕскĕнскер
Хĕрхенӳ туйăмне те çуратĕ...
Ерчĕн ывăл пулса çитĕ-çке!

Эй, Çĕршывăм, тĕпрен чыслăн чĕрĕл!
Чĕрĕлмешкĕн çук мар халь мехел.
Ман чĕлхен усрав вырăнĕ-çĕрĕ
Пулаясчĕ сан ĕмĕрлĕхе.

Эй, Çĕршывăм, эс çеç манăн ĕмĕт.
Чун мăнаçлăхĕ те — пĕр санран.
Ахаль мар-тăр таса шанчăк хĕмĕ
Çутатса ялкăшать пур вăйран.

* * *

Кĕркунне малтан кăшт иккĕленнĕ,
Юр сапмасăр тăнă çĕр çине.
Халь вара ман кантăк чĕнтĕрленнĕ,
Вăл тӳсет каллех хĕл хĕскĕчне.

Миçе хут-ши шартлама каçалăк
Эп каçман-тăр пурнăç тăршшĕнче.
Çĕтейсе юлайнă-мĕн ачалăх
Кантăкри асамлăх тĕнчинче.

Кирпĕч евĕр чăнкăр-чăнкăр чăтлăх.
Чăн, сывлать, ав, сиввĕн утмаçул.
Кăкăртан чышать сив сывлăш шăртлăн.
Пĕр сасса илтеп миçемĕш çул:

«Ан йĕр, ывлăм! Чăт, чăтма çуратнă
Эп сире çак çылăхлă çĕре...»
Шăн юрпа таткаланать-и атă,—
Тӳсĕмлĕх пичечĕ — сăн-питре.

Сăн чулланнă çамрăклах, хавассăр...
Çавăнпах-тăр халь те тинкерет
Ман çине сив кантăкран ним сассăр
Шухăша йăлт путнă силуэт.

* * *

Кайса çухалнă ĕмĕрсем
Калла килеççĕ çаврăнса,
Ума тухаççĕ сыпăнса...
Пĕр шывланса, пĕр хĕмленсе
Яш каччăн вичкĕн куçĕсем
Сăнаççĕ вăйсăр Çĕршыва —
Вăл сусăр, юнăхать суранĕ...
Пите хуплаççĕ алăсем.
Ăса поэт çакна хывать:
Çĕршывсăр вăл сив кĕл тусанĕ!

Пуçра пин шухăш явăнать.
Çиçет те шанăç çуралса,
Кĕçех сӳнет ватта кайса.
Вара çĕн шухăш хутшăнать:
Ӳт илмеллех çав сурана!
Чăваш çĕршывĕ хăй вăйне,
Чăваш чĕлхи хăй хăватне
Çут тĕнчене кăтартмаллах,
Чăваш ачи те тухмаллах.
Çак шухăшра — пит вичкĕн ăс.
Эс ун йĕрне, юлташ, ан пăс,
Туйса илсе малашшăн тăс.

Хĕрӳ йыхрав кĕтет хурав.
Сас пачĕ хирĕç пин хунав.
Эй, Çеçпĕл, çав йыша вăй пар!
Çĕн Сывлăшпа вăл пĕр кавар
Пулса кĕрештĕрччĕ патвар!

Çĕн Сывлăш Çĕр çинче вĕрет.
Чăн чĕрĕлет! Кай, чун сивви!
Ялтра, ыр самана тĕвви!

Тахçан Çĕршывăм çакăнса
Тăрайнă тимĕр хĕресрен
Эп тĕрĕслĕх хĕçне туса
Çĕн халлăн тăвăла кĕреп.

* * *

Иртни çинчен шухăшласан,
Куратăп эпĕ: ман хыçран
Пăхса тăрса эс юлнине,
Юратнă манăçми анне.

Ярса пусма пĕлмен çĕрте
Аптранă чух, эп куçкĕрет
Куратăп çав пусас тĕлте
Сан уçăмлă йĕрна, атте.

Хальхи çинчен шухăшласан,
Куратăп: ывăл-хĕрĕм ман
Çухрăмсене çĕне-çĕне
Вĕçме туптать вăй-хăватне.

Малашлăха ĕмĕтленсен,
Куратăп, пур мăнукăмсен
Ай-хай сăваплă шăпине,
Пуçри ăстăн çивĕчлĕхне.

Кунçул çинчен шухăшласан,
Илтетĕп: чĕресем пĕр тан
Хĕпĕртесе те хуйхăрса
Тăраççé иксĕлми тапса.

Çурçĕр çилне

Çеçпĕл Мишши майлă.

Çурçĕр çилĕ, çивĕччĕн,
Шилетсе вăй çитĕшĕн,
Кассăн-кассăн, айăн-çийĕн,
Тустарса сив юр çĕр çийĕн,
Вирлĕн çуйкăнланса çиçĕн,
Халăх ăстăнне шуйхат.
Çуптарса кăлар вут-çиçĕм,
Сир, хӳтер сивлек ыйха,
Ун ытамĕнче, ытах,
Шухăшлав типсе хухать.

Çурçĕр çилĕ,— умăнта
Çĕнĕ самана чăвашĕ,
Çĕнетӳ халь ун çулташĕ.
Ах, анчах... иртни хытах
Ун ăстăнĕн вучахне
Шыв сапса тăрса хавшатнă.

Çурçĕр çилĕ, эс хăватлăн
Наци кăмăл-туйăмне
Ян каян чан сассипе
Сиплекен чĕр сывлăш пек
Халăхра чĕртсе хускат.
Çĕн астăвăм, вăй-хăват
Вĕрсе кĕрт чунне-юнне.
Аллă тĕслĕ ăс ун пултăр,
Ăсĕпе ăсталăх туптăр,
Пултăр вăл тĕнче ăсти.
Усалли, ытти-хатти
Ун чунне нихçан ан тултăр.
Халăхăн ăстăн çути
Тĕттĕме ая йăлт тутăр.
Чăваш ăсĕ мул та тутăр,
Урă пултăр, ырпа тултăр,
Ырана тӳр çул вăл туптăр,
Уçлăха куçлатăр, уттăр...

Çурçĕр çилĕ, хăвăртрах
Сир, хӳтер сивлек ыйха.
Ун ытамĕнче, ытах,
Шухăшлав типсе хухать.

Çăлкуç

Кĕрлесе вăл юхмасть
Çурхи шыв пек сăртран.
Кăпăка та ӳксе
Вăл сикмест çырантан.

Вăл тăрать тĕк тапса
Кахăр чул айĕнчен.
Шывĕ тăрă куç пек,
Калăн: вăл — кĕленче.

Типĕтеймĕç ăна
Шăрăх çу кунĕсем,
Витĕнтермĕç пăрпа
Хĕллехи сивĕсем.

Имлĕ-симлĕ шыва
Ма пахматсăр ĕçес?..
Пур пуянлăх кунта,
Пилсĕр мар ку кĕтес:

Вĕçсĕр-хĕрсĕр тырпул
Сĕрĕшет уй-хирте,
Пахчаçимĕç шултра
Çитĕнет нӳр çĕрте.

Ах, çăлкуç, ху çумна
Хыт туртан-çке мана!
Эп саватăп чунтан
Сан асамлă шывна.

Эсĕ ман шăпамра
Хам аннеçĕм пекех,
Мана йывăр санран
Уйрăлмашкăн каллех.

Сансăр эп çĕр çинче
Пурнаймастăп, ĕнен...
Çырану хĕрринче
Халь ларатăп пĕччен.

Асилетĕп: кунта
Эп чупаттăм çарран,
Сывлăм шывĕпеле
Çăвăнса ир пулсан.

Пуçтараттăм çырла
Çывăхри вăрманта,
Туссемпе вăрçăлла
Эп выляттăм унта.

Астăватăп: хитре
Чечексем пуçтарса
Кăшăл çыхрĕ савни,
Парнелерĕ мана.

Тав сăмахĕ ун чух
Ҫалаймарăм тупса,
Мăкăнь пек тутинчен
Чуптăвайрăм кăна.

Юрататăп, ҫăлкуҫ,
Эпĕ сан вырăнна:
Пысăк кӳлĕ, вăрман,
Ҫӳллĕ янкăр тӳпе...
Мĕн тери халь вĕсем
Илĕртеççĕ мана!
Вăй парса чĕрене,
Ав, хускатрĕҫ тем пек.

Питĕ шел, эп кунта
Ҫилтĕм пĕр куна çеç.
Ма каç сĕмĕ халех
Анчĕ-ши çĕр çине?
Çĕр каçма çăлкуçпа
Пĕрме-пĕр юлсан çеç
Туйрăм: кĕçĕр манпа
Вăл хавха тупнине...

Эй, çӳрем пĕрех хут
Ывăна пĕлмесле,
Çут Вĕскер хĕррине
Систермесĕр çитем.
Эп кунта килнĕрен
Савăнса, вăл халех
Пурçăн çил кăларса,
Тен, вăратĕ хумсем.

Эп пĕр хумĕ çине
Ларнăн чу! ыткăнам

Шухăшпа манăçми
Хам çуралнă киле.
Анкарти хыçĕнче
Çепĕç сăвă вулам,
Ачаш çил кĕввипе
Пĕр хам çеç илтмелле...

Тухăç пачĕ алне
Вăйсăр тул çутине.
Эпĕ ӳкрĕм çемçе,
Нӳрĕ курăк çине.

Қалаçатăп хуллен
Эп салху çăлкуçпа,
Вăл чĕнмест, куççульне
Юхтарать ман умпа...

Ах, çăлкуç, маншăн эс
Ман аннеçĕм пекех.
Сан патна чун туртсан,
Эпĕ килĕп каллех.

Пархатарлă шывна
Ун чух ĕçĕп вырtса.
Ман юратнă çăлкуç,
Тăр эс ĕмĕр тапса!

Татăлми чĕп-чĕрĕ юхăм

* * *

Тĕллĕн-тĕллĕн выртакан шур юрĕ
Çĕр çине шур саплăк хунă пек.
Çĕрĕ çирĕп, саплăкĕ мĕн курĕ:
Çĕрĕкрен вăл çĕтĕлет-çке тек.

Эп утатăп çеремпе. Çĕр — пĕтĕ.
Хытăрах пусмассерен ура
Çĕр йăсăлтатса илет те,— пĕтĕм
Туйăма йăлт вăйратса ярать.

Пур çак тăпрара темле аваллăх
Япали (туятăп чун-чĕмпе).
Вăл — илемлĕ-ăрăмлă-яланлăх,
Вăл — юмахлă-тĕлĕклĕ те пек.

Çĕр-хĕрарăм! Эс-ши парнелетĕн
Юн, ӳт-пуç, сăнар çынна ялан?
Çакă паллă, эсĕ виçелетĕн
Пурнăç юхăмне хĕрарăмла.

* * *

Сана курсассăн, çут тĕнче,
Шарилетсе йĕрсе эп янă...
Эс тăнă куçăм умĕнче...
Мĕнрен-ши чунăм ман хăранă?

Çуралнă эпĕ шевлепе,
Ун çутăшне пĕлсех эп ӳснĕ.
Тĕнче мана хăй шăршипе,
Хăй тĕсĕпе те ӳсĕртнĕ.

Пĕлсессĕн çăлăн чĕр шывне,
Сипетлĕ сывлăша пĕлсессĕн,
Ма туйăнчĕç-ши ун чухне
Çавсем нихçан та иксĕлмессĕн?

Пĕр-пĕр ăру курассине
Çуралсанах эп пĕлнĕ темĕп.
Анчах тĕнчемĕр хуйхине
Ман чун туйман-ши?— Темĕн.

* * *

Шутлаттăм эп: илем — çăлать, тесе.
Вăл вилĕм кӳрессе пач шутламанччĕ:
Выртать умра, хĕвел çинче типсе
Пĕр чĕр чечек, вилес пек пур çуначĕ.

Элле хитре пулнах-тăр çав чечек.
— Ах, мĕскĕн, айăпу мĕнре-ши пулчĕ?
— Ытла та эпĕ хӳхĕмччĕ... унччен.
Илемлĕрен... кунçул шалчи... ак... тулчĕ.

Тавах сана, асфальт çинчи чечек,
Пĕр самантрах ман куçăма эс уçрăн.
Çĕрĕмĕре, вăл пулнăран чечен,
Усал куçран пытарайса кам усрĕ?

* * *

Сăнăм-питĕмре çиçсен те яшлăх,
Тем амакĕ пур ман ăшчикре:
Ачаран пуçтарăннă ачашлăх
Пĕр çĕклем выртать-çке чĕремре.

Сăнсăррисене, хитрисене те
Çав ăшри йăтмак япалана
Кăмăлтан укçасăрах сĕнеттĕм,—
Йăтаймарĕ пĕр пике ăна.

Чĕремре — атте-анне артакĕ.
Эй, илсемĕр хăшĕ те пулин!
— Пар çĕр-аннӳне,— систерчĕ такăш.
Ывăннă чĕре лăш пулчĕ тин.

Çурхи кăмăл

Çурхи çĕр-шывăн сăн-сăпачĕ евĕк.
Тавралăх ыррăн тыткăнлать пире.
Мăя çинчи çут кĕмĕл тенкĕ евĕр
Вăл илĕртӳллĕ, шавлă та хитре.

Йăмра папакĕсем чăмăртанаççĕ,
Симĕсленеççĕ сăрт хăякĕсем,
Тĕтре çăварĕнче качăртатаççĕ
Çилсем çисе яман юр таткисем.

Лакăмсене шыв лăк тулать ир-каçăн,
Шавлать вăл пичкери сăра майлах.
Ăшра чĕреçĕм пикенсех хальхаççăн
Арканнă кив юратăва майлать.

* * *

Ма хитре-ши кĕçĕр таврара?
Ма хĕрӳ-ши çăлтăрсен ташши?
Мĕншĕнех-ши пирĕн пахчаран
Каплансах юхать чечек шăрши?

Лăпланмасть пĕрре те анатра
Юханшывăн шăнкăрти сасси.
Çĕмĕртсем ешернĕ вăхăтра
Камăн килмĕ вăйлă савасси.

Кун евчи пек тул çути килсен
Çил çуначĕ иртрĕ сĕртĕнсе,
Çеçкесем те ӳкрĕç вĕл-вĕçсе...
Ман чĕрем çеç юлчĕ кĕрлесе.

Йрхине

Иртнĕ яшлăх вырăнне эп
Йышăнса çуркуннене,
Çывăрмасăр киленетĕп,
Сăнаса кун килнине.

Çук ниçта пĕр ĕмĕлке те.
Вут тивмен-ха хӳмене.
Анне тăнă, çенĕкре тем
Чун кĕртет витресене.

Уйăх — сăнĕ-пичĕ шурнă —
Кĕчĕ пĕлĕтсен хĕвне.
Ял çине сĕвек сăрт урлă
Ура ячĕ сар хĕвел.

Кăштахран чечек ак уçĕ
Сар куçне çерем çинче.
Кун илсе килет кĕтӳçĕ
Вăрăм пушă вĕçĕнче.

Хӳрăн

Уй-хир, вăрман çийĕн сар хĕвел сапсассăн
Çуркуннехи ылтăн, ăш шевлисене.
Тураттисем урлă уртрĕ васкамасăр
Çамрăк йăрăс хурăн çивĕчĕсене.

Пăчăр шур кĕпеллĕ пĕвĕ тăпăл-тăпăл.
Куç тулли тăрать вăл кантăк умĕнче.
Тулхăрать-и майсăр хăш чухне çил-тăвăл,—
Çук салхулăх пурпĕр сăнĕ-питĕнче.

Юмахри пике пек капăр шурă хурăн.
Урăх йывăç çук-тăр илемли унран.
Тенкисем те унăн кăлараççĕ юрă,
Çемĕ майăн кăмăл парăсне сарать.

* * *

Кӳлленчĕкри сип-симĕс курăк.
Вĕт-вĕт хумсем туна тавра.
Çап-çамрăк çулçăсем мĕнпурĕ
Ачаш, чĕтренкĕ мĕн таран!

34770-498.
Национальная библиотека Чувашской Республики

Тин шăтнă курăк ăшшăн-ăшшăн
Савни куçран тинкернĕ пек,
Ав, сан çине пăхать халь шăппăн,
Эс — ун çине,
Тĕлĕннипе.

Епле-ха́ тĕлĕнмĕн! Тен, шăтнă
Вăл пирĕштин пек илемрен.
Куратăп эп: темле вăй шăлнă
Салхулăха сан сăн-питрен.

* * *

Çуркунне каллех çитнишĕн,
Çутçанталăк чĕрĕлнишĕн,
Çăмăллăн чĕрем сикет.
Çук, пулман та пек инкек.

Ах, пулнах çав!
Пулнă — иртнĕ.
Тарăн йĕрĕ çеç юлман.
Çав йĕре юр шывĕ çинĕ...
Ма, чĕрем, апла суран?

* * *

Чĕтренсе ухăнать хăрнă вулă
Чĕррисем хушшинче çулран-çул.
Пĕр вилсен чĕрĕлни хăçан пулнă?
Ма тытать ăна йывăç кун чул?

Тен, пире инкекне кăтартасшăн
Çамрăк хурăн:— Кур, çыннăм, вулла.
Кур та ӳлĕм нихçан та ан ашкăн
Чĕрĕлен çутçанталăкпала.

* * *

Жизнь с крючка сорвалась...
НАВОИ

Çу пин-пин çулçăпа ал çупса хыт тĕсет,
Симĕс улăх — арена пекех.
Çĕр çине çаптарса чĕрнине çĕмĕрсех
Ăшă çумăр унта халь ӳкет.

Ентĕ манăн кунçулăм та ӳкĕ çаплах.
Хăй хăçан ӳкессе чухлаймасть.
Тен, ытла хыпăнсах çекĕлтен татăлать...
Вăл ӳкинччĕ çĕре шăварма,
Пĕррере çумăр пек пăсланма.

Утăра

Кăкăр çумне ыйхăласа çитсе
ача тĕршĕннĕ пек,
Ӳкет лаш! касна курăк
çулакансен урийĕсем çумне,
тăрса вăл лармĕ нихăçан та урăх.
Юрлать çава, хĕвел хĕртет хивре.
Касать тăварлă тар ӳте-тире.

* * *

Асамат кĕперĕ — куртăм —
Сӳнчĕ, ӳкрĕ сăрт хыçне.
Çĕклесе ăна эп хутăм
Çут хĕвел шевли çине.

Вăл каллех çич тĕслĕн çиçрĕ,
Тĕренсе чĕрем çине.
...Асăрхарăм, таçта çиçĕм
Хуçăлса тăкăннине.

* * *

Пĕр татăк пĕлĕт. Шăп тупăк евĕр
Куçа вăл курăнать, пăхсан.
Пуш-пушă тупăк пушшех киревсĕр,
Ман еннелле шăвать мăран.

Тăри юрриллĕ, утмăлтуратлă,
Сап-сар тырпуллă уйсене
Тата та хытă халь çеç юратрăм,
Курмаслăн урăх малашне.

Çиле тухмашкăн шав тархаслатăп:
— Манран сирсемччĕ усала!
Хăранипе-тĕр шăнса хытатăп.
Хăтараканăм, çил, пулах!

Ӳй урлӑ каҫрĕ хаваслӑ варкӑш,
Инкеклĕхрен мана ҫӑлма.
Тусса пытанчĕ,
Ав, тупӑк-таркӑн.
Вӑл халĕ ĕнтĕ — манӑн мар.

Телейпе эрлĕк хушшинче

Илемлĕ сад пахчи. Унтан юхаҫҫĕ
Саркайӑк юррисем.
Асӑрхаса,
Палланӑ пек, мана салам калаҫҫĕ
Вӑш-вӑшӑл туратсем пӑшӑлтатса.

Ҫивелнĕ сукмакпа иртсе пыруҫӑн,
Айван хунав ҫеҫ шӑтнӑ вырӑнта
Кĕрнек улмуҫҫине тĕлпулчĕ куҫӑм,
Улми авать кашни йĕс-турата.

Шӑварнӑ чух эп шутламан ним чул та
Ун ҫитĕннĕ пĕвне час курасса.
Мĕнех, эп хам та яшлӑха ал султӑм.
...Сӑнатӑп йывӑҫа кӑмӑлласа.

Вӑл эпĕ кĕтнинчен чылай паха-ҫке:
Вылять, ялтрать хĕвел тĕрри унра.
Ҫапла шеп ман та пурӑнса пӑхасчĕ,
Инкек тени ан пултӑрччĕ умра.

Анчах ҫын инкекрен тӑмасть-мĕн татӑк...
Хам ҫурӑм хыҫĕнче илтеп: таҫта
Чĕриклетет пĕр хӑр турат сасартӑк.
Нивушлĕ эп те типĕп-ши тахҫан?

Шурӑ эрĕм

Надежда Захарова юрӑҫа асӑнса

Асӑмрах-ха хӳхĕм пӳ-си,
Илтĕнмест тек уҫӑ сасси.
...Вилтӑпри ҫинче тĕмсĕлсе
Йӳç куҫҫуллĕ эрĕм ӳсет.

Юрлатчĕ — куç хупрĕ хĕр...
Шур эрĕм, ан йĕр, ан йĕр.
Шур эрĕм йӳçĕ, йӳçĕ куççуль...
Юрăпа çеç чун лăпланĕ,
Юрăпа çеç çăмăл пуль.

Хăнăхуллă анăç сӳнни,
Хăнăхусăр çын çухални.
Макăртать-çке çĕн тĕмеке,
Ахлатни — йӳç эрĕм пекех.

Хуйхăри анне пек тӳлек.
Анланса-и, тусăм, илер
Мĕншĕнех те эрĕм çине
Лаплатса шур юр ӳкнине.

Сиенлĕ тĕмĕ

Тĕрĕслĕхшĕн тан мар кĕрешĕве тухнă Николай Белова халаллатăп.

Кĕтмер çĕр çине шăтса ӳснĕ
Пур çилĕн сиенлĕ тĕми.
Мĕн-ма курăксем пуçне уснă?
Е пулнă мĕнпурĕ чĕнми?

Çанталăк йӳç наркăмăш янă
Сăх тĕмĕ ăшне тымартан.
Тумлать çав шĕвек халь тумламăн
Çĕре хупăри çурăкран.

Каять инçете усал шăршă
Пиншер пуçсене минретсе.
Е эпĕр чăнах та-ши «шăлсăр»:
Типетпĕр сăмахсăр тӳссе.

Эй, эсĕ, Этем, ма тататăн
Синкер яракан çимĕçне?
Тĕм парĕ çĕн çимĕç татах та,
Кăкласчĕ сан ун тымарне.

Хăрушă «çырла» пухнăçемĕн
Вăл тин кĕрес çук ӳкĕте.
Татать юлашки çимĕçе те,
Татать — юлашки вăйпа тен.

Çуках-ши, ара, нимле шанчăк,
Тĕм наркăмăш сĕнчĕ каллех...
Чуралăх самантлăх çеç ванчĕ,
Хăрать çураçу çеçкеллех.

Ик куç уçăлать тĕслĕх витĕр,
Сăнатăн вара, тем шутлан.
Пĕччен сурсан юлмĕ палли те,
Йыш тăвĕ мăн кӳлĕ сурсан.

Кĕркунне

Юлашки хут ал сулнăн
Манпа сывпуллашма,
Ӳкеççĕ шăп, салхуллăн
Тип çулçăсем ума.

Уйра пас тытнă курăк,
Пуçри кăвак çӳç пек.
Сар чечексем те урăх
Çунат сараймĕç тек.

Юта вĕçет хуркайăк —
Тата тăсма çăва.
Ăна ан тăвăр айăп,—
Çурччен çеç пуш йăва.

Кĕрхи çил

Сикмĕрчĕклĕ мăн çулпа
Сапаланнă пур çулçа,
Кур, кĕрхи çил-урапа
Тустарать, ав, кун каçа.

Яланхи пек сиккипе
Çил кунта халь ыткăнать.
Савнă тавралăхĕпе
Тĕлпуласшăн, курăнать.

Урăм-сурăм тустарса
Яла çитрĕ, ашкăнать.
Улмуççине ухтарса
Тутлă улмасем тăкать.

Вăл кунта çитни çинчен
Пин саспа пралук юрлать.
Çамрăк йĕс-туратсенчен
Ылтăн çумăр тăкăнать.

* * *

Пĕлместĕп, хăшĕ халĕ кĕскерех:
Хура каçсем-ши е сап-сар кунсем-ши?
Тыр турттарас кунсем-çĕрсем пĕрех
Кĕске пек пурте туйăнаççĕ темшĕн.

Куç хăрпăкĕсенчен кире пукан
Кам çакнă-ши?.. Тупса кунтах эс вырăн
Ик-виç минутлăха çеç сĕнк пулан —
Юхать-юхать куç умĕнчех сар тырă.

Кĕç хум чӳхет сана çине-çине,
Вара эс урăх тĕнчерен яр-уççăн
Илтетĕн пек пускилĕн сассине:
«Тăр, тăр ачам! Çитет сана.. Тăр, уçăл».

Пĕлместĕп, хăшĕ халĕ кĕскерех:
Хура каçсем-ши е сап-сар кунсем-ши?
Тыр турттарас кунсем-çĕрсем пĕрех
Кĕске пек пурте туйăнаççĕ темшĕн.

* * *

Тăрать тытса çăтă
Тĕтре чиене.
Турат çинче «çăлтăр
Çеçки» чĕтренет.

Тăкать катăк уйăх
Шуркам çутине.
Тулать чуна тунсăх,
Шур илтĕр куçне.

Тăрна карти

Р. Гамзатов майлă.

Эп кĕрсерен нумай сана сăнанă,
Кăкăр тĕлне аллăмсене тытса:
Çӳреççĕ пек пире тем йыхравланăн,
Вăрçа кĕрсе пуç хунă салтаксем.

Çав йыхрава çунат çинче упраççĕ
Вăрçи пĕтнĕренпех шур тăрнасем.
Çавăнтанпах тем каçсерен шыраççĕ
Çӳл тӳпере сĕм тăлăх арăмсем.

Пĕчченлĕх вăл пуриншĕн те-çке йӳçĕ...
Чуна çурса салхун сас панăçем,
Вилнисене астутарса вĕçӳçĕн,
Чун варлисем пекех халь тăрнасем.

Шăпасем

Синкер çилсене, çатăр сивĕсене
Тӳсет çӳл тури тăлăх хурăн.
Кĕтмест вăл такам кĕрессе хăй хутне,
Пĕчченшĕн, тен, лайăх ку туртăм.

Эп хам та телейсĕр çап-çамрăк пуçпа
Пĕччен тăлăха тăрса юлтăм.
Касать-и сив çил е çапать-и шăпа,
Иртен-çӳрене мĕн ĕç пултăр.

Мĕнле те пулин хамăрах... ав, лăпăх
Пĕр пек эпир. (Туйрăр та пулĕ.)
Кастар, çил, ăна,
Çап мана та, шăпа,
Пиртен пĕри пурĕпĕр юлĕ.

Çеçпĕл

Шур çеçкесем тин çеç-ха çурчĕ — шанчĕ.
Ачаш çилпе паллашançи пулайрĕ — шанчĕ.
Шевле ĕçме çуккишĕн çуйкăнланчĕ,
Хура вăрман сивлеклĕхне чар! çурчĕ—шанчĕ.

* * *

Курăкне çулсан,
Каять хиртен илем.
Курас...
Шел, курăк çук.

Анăç тĕс ярсан,
Сӳнет сап-сар шевле.
Курас...
Шел, шуçăм çук.

* * *

Аманнă çунатсем
Ыратнипе хутланнăн,
Хĕссе килет чĕрем
Ватта туйса, мăнтарăн.

* * *

Чашăл шăтрĕ ем-ешĕл калча
Пурнăç сипĕ, хăвачĕ илсе.
Туйăмсен анинче çеç пачах
Татăлмаççĕ хивре шухăшсем.

* * *

Пин-пин нухратлă кăпăш çурматĕттĕм
Сасартăк куçа ячĕ йӳçĕ тĕтĕм.

Ăс

Ăс — тыткăнра.
Ярса илнĕ ăна
Асаплăх.
Тавçăртăм çавна:
Ăстăнăм çут тĕнчен майне-шывне
Пĕлсе çитесшĕн шеллемест хăйне.
Çăтмах тата тамăк мĕскершĕн пур чуншăн?..
Кăвак хуппине уçап хушшăн-хушшăн.

Пиçнĕ çырла техĕмĕ

Манăçми пике

Кунçулăм умĕнче
Шупкалнă куçсенче
Сана кăна упратăп çулсерен.
Ман ытарми пике
Эс çывăхра пекех
Тата та çутăрах, ачаш, хитре.

Кăра çил-тăвăлра,
Хаяр шартламара
Эс пăрчăкан пек вĕçрĕн манпалан.
Шăмшак шăнса кӳтсен,
Вăй-хал пĕтсе килсен
Эс ăшăтрăн, эс тытрăн ман алран.

Эп çывăрнă чухне
Ларатăн пуç вĕçне,
Ирччен сыхлатăн ман ыйха ялан.
Пĕлсем, пике, пĕлсем:
Ку тарана çитсе
Эп сансăр пĕр самант та пурăнман.

Пурнас кунçулăмра
Хăюсăр пулнăран
Кĕме пӳрмен мана сан кил-çуртна.
Черченкĕ чунунта
Эп мар пулсассăн та
Памастăп пурпĕр никама сана.

Нимскер те ан кала:
Сăмахсăр саламлать
Телей сунса пире мĕнпур тĕнче.
Чĕрем — кĕсле иккен,
Сĕм каç та кун пекех
Эс пур чухне ман тĕссĕр куçсенче.

Пулас марччĕ

Пулас марччĕ манăн уйăх пек хевтесĕр,
Пулас марччĕ çумăр ăмăр кунсенче.
Пĕр самантлăха та чунсăр мĕлке евĕр
Выртас марччĕ урлă сан çулу çинче.

Пулас марччĕ манăн çăлтăр пек тĕревсĕр,
Пулас марччĕ вичкĕн çил яра куна.
Пĕр самантлăха та сĕмсĕр элек евĕр
Сĕмлес марччĕ сиввĕн сан хитре сăнна.

Пулас марччĕ манăн сӳрĕк каçхи шуçăм,
Пулас марччĕ манăн йăтăнчăк çыран...
Сан патна çитмешкĕн, чун йăпатмăш тусăм,
Çирĕп ик çунатлă пулаячĕ ман.

* * *

Мăшăрăма

Эп паратăп сана, савнă тусăм,
Çак чечек çыххине пиллесе.
Тайăлать, пикемпиçĕм, ман пуçăм
Сан умра кăмăлтан, ĕненсем.

Эп сана тĕл пулсан суранларĕ
Чĕреме пĕр асамлă çĕмрен.
Унтанпа çут тĕнчемĕр сăнарĕ
Маншăн ĕмĕр манма çук хитре.

Ку чечек çыххи евĕр сăнна эп
Нихăçан та яман умăмран.
Ак каллех сана лăпкăн сăнатăп,
Çутă шанчăк чĕреçĕм упрать.

Уйăхпи

Чĕрӳнте çуккишĕн çураçу
Йăл куллу çухалнăччĕ сӳнсе,
Шывланса тăратчĕ ик куçу
Вĕсенче чĕтретчĕç çăлтăрсем.

Ир пиçсе çитнишĕн юрату,
Васкаса килнишĕн уйрăлу
Айăп çукчĕ пирĕнте ним чул.
Пулса юлтăн эсĕ асилӳ.

Явăнать шур мамăк пек вĕçсе
Сывлăшра пăлханчăк юр пĕрчи...
Чарăнми пĕрвĕçĕм хĕвĕшсе
Туслăха-ши татрĕ хĕл тĕнчи?

Шурă юр асамлăн вĕл вĕçни
Асăма кĕрсе çеç юлчĕ-ши?
Йăл куллун хунавĕ, чун савни,
Маншăн малашне шавламĕ-ши?

Савăнăç çухатрăм пурнăçра,
Пурпĕрех кулатăп ĕмĕтре.
Кĕç çурса тухаслăн кăкăра
Талпăнать чĕреçĕм каçсерен.

Ма инçе эс, манăн Уйăхпи?
Ман пата ансамччĕ тӳперен.
Вара ӳлĕм пурнăç урапи
Тикĕс чупĕ маншăн ĕмĕрех.

* * *

Сăвва кӳме çĕклем хаваслăх
Сана кăна, тен, пӳрнĕ пуль.
Нихçан та ан сывла эс ассăн,
Яланлăх хĕпĕртевлĕ пул.

Сан питӳнти кашни çĕн кулă
Ӳкет ман чун тĕпне çемçен...
Мана ялан çапла эс пулăш
Çыравçăн йывăр ĕçĕнче.

Çул çинче

Тăсăлать тем анлăш улăх.
Çул çинче йышран-и юлăн,—
Эп люцерна уйĕпе
Утрăм кӳршĕ хĕрĕпе.

Утти ырă мĕн тери,
Камшăн пулĕ хĕр чĕри?

Пĕвĕ-сийĕ — куç ытамĕ,
Кам-ши вĕсене ăмсанмĕ!
Пытăм ытарми пăхса,
Хĕр йăл кулчĕ вăтанса.

Кулли çепĕç мĕн тери,
Камшăн пулĕ-ши чĕри?

Çил таçтан хускалчĕ-тухрĕ,
Пирĕнпе ытамлăн юхрĕ.
Эй, вылянчăк шухă çил,
Канăçа туртса ан ил!

Йышăнсассăн хĕр чĕри,—
Паянтан эп ун чури.

* * *

Пулĕмре ларса хевте пĕтет,
Чун-чĕрем çунать-шим килĕшӳллĕн?
Сисĕм пур — вокзал мана кĕтет,
Тунсăхăм — хаваслă хĕвĕшӳшĕн.

Хăм çине вашт çеç тумтир уртса,
Шутласа тăмасăр, тишкерӳллĕн,
Хирĕç тухрăм эп автобуса.
Ахаль çеç... тен, паллакан тĕл пулĕ...

Халь шуйханнă кайăксем пекех
Туйăнать килен-каян çак халăх.
Куç умне пĕр ушкăнĕ лекет,
Пулнăран ыттисенчен хавхаллă.

Кĕпӳ мар-ши илчĕ вĕлтлетсе?
Куç ултавĕ çеç ку ан пулинччĕ!
Аллунтан эс çыхă ӳкерсех,
Ытама чупса пырса кĕринччĕ.

Çăлăнăççăрлăх

Хĕлхем пек çеçкесем шанаççĕ,
Сив тăм ӳксессĕн каçхине.
Куллен кĕте-кĕте сана çеç
Ман чун та йăшрĕ ахăртнех.

Мана хăрах юлма, тен, килĕ,
Анчах пĕлместĕп мар çавна:
Кайсан эс — тунсăхпа эп вилĕп,
Килсен те — пĕтĕп санранах.

* * *

Тин çунă çӳç шăрши нимрен те тутлă —
Çăта-çăта сывлатăп каçăхсах.
Чечек шăршиллĕ шурă-шурă ӳтлĕ
Хĕрарăм кĕлетки!.. Ăнсăрлатса
Ярать ӳтрен ӳте куçан хĕрӳлĕх...
Илемлĕ куçсенчен тута туни...
Тăп тутаран та...
Вăрттăн, именӳллĕн
Сĕм йывăç тăррисем çӳлтен пăхни...

Сыврать сан çӳç кăтри, алсем сывраççĕ,
Сывратăн Эсĕ кĕçĕр чăтлăхра.
Эй, шурăмпуç! Тата кăшт сан тăхтасчĕ.
Эпир кĕç уйрăлатпăр хамăрах.

Эс тутана тута çинчен ан илччĕ,
Ан уйăрччĕ çыхланнă алсене.
Ах, уйрăлу-шим, тусăмсем-и, килчĕ?
Ик чун активĕ-и ун йӳççине?

Ав, йывăç тăррисем пире сăнаççĕ,
Хăватлăн авăтать таçта куккук.
Куккук, çынсем вăхăтпалан пурнаççĕ.
Ан суй эс,
Шутласа пĕрвĕçĕм кун.

Эй, шурăмпуç! Пире ан васкатсамччĕ,
Юратăва вăта çĕртен ан тат!
...Савни çумра чухне тĕнче — асамччĕ,
Пулни мана вĕрин халь пăчăртать.

* * *

Хĕвел пăхмасть сар хĕр пек йăл кулса.
Çут кӳлĕ кӳлепи те йăм-хура.
Сана пĕр авăк эпĕ курмасан
Ман куç çутта та тĕксĕммĕн курать.

Хăратăп эс сана кураймасран,
Яланлăхах куç суккăрланасран.

* * *

Çут тĕнчене сăн кӳрекенĕ — эс,
Çав йăлтăркка тĕнчен хуçи те — эс.
Эп хăнара çеç санăн тĕнчере.
Хăпма епле мехел ман çитерес?

Хĕрупраç

Шур сĕтри кӳкен çырли майлах
Икĕ куçăн чăмăр шăрçисем.
Йĕкĕр ывăçа шăнăçмалла
Çинçе пилĕк...
Çамрăк хĕр, пĕлсем:

Санăн шеп сăнарунта ăнран
Яракан ӳт-пӳсĕр те нумай.
Çавăн чухлĕ мул санра ăçтан?..
(Чăн, хĕр-вутăшран эс кая мар.)

Вăл сасартăк ман пулса тăрсан?..
Ку телей анратĕччĕ мана...
Халь вара ман чунăм эс пуртан
Урăх тĕнчере, ав, ярăнать.

Эпĕр тĕлленмен тасалăхпа,
Чи сăваплă кăмăл-туйăмпа
Тулнă çав тĕнче!
Тен, çавăнпах
Эпĕ хам та йăлт тасалнă пек.

Эс пăхатăн ман çине

Янкăр кăнтăр кунĕнче
Тинкерсе çине-çинех
Эс пăхатăн ман çине
Тем чул халăх хушшинчен.
Çут шевле-ши, урăх-ши
Асăрхарăн эс манра?
Чăн та йăлкăшатăп-ши?
Пур-ши çут хĕлхем чунра?

Сар хĕвелĕн ялкăшса
Эс сăнатăн халь мана.
Иксĕлмессĕн туйăнать
Çавă çутă нихăçан.
Ман ачашлăхпа çапла
Çуталса тăмастăн-ши?
Килнине эс кăмăла
Ай, мĕнле калайăп-ши?

Эп çунатăп чарăнми
Сан чĕрӳн хĕлхемĕпе.
Ман çавна сана мĕнпе
Пĕлтерес-ши, пикемпи?
Куç тулли тăран çаплах.
Çăлтăр темелле пăхсан.
Çунтăм эп те çăлтăрлах
Ман çине эс пăхнăран.

/ Çурхи юрă

Ывăнмасăр çĕрĕпех юрлать
Шăпчăк — ăш çунтармăш юрăçи.
Шурă çĕмĕрте карта урлах
Ыталать те ачашлать ăш çил.

Ушкăнпа выляççĕ çăлтăрсем:
Юрату вĕсемшĕн ним те мар.
Ман вара, сана кĕтсе, чĕрем
Сапалать канусăр шĕл кăвар.

Шупашкарах сăн çапрĕ тӳпене,
Эс тухмарăн, тусăм, пурпĕрех.
Ĕнтĕ Алтăр çăлтăр ӳпĕнет,
Шуçăм çутине тăкса çĕре.

Мĕншĕн-ши, савниçĕм, кĕттерен,
Ма-ши эс тухмастăн урама?
Таврăнсассăн каçпала ĕçрен,
Килĕшсеччĕ иккĕн тĕл пулма.

* * *

Хĕр-пикен куçĕ — янкăр тӳпе.
Ун аниче пин хĕлхем.
Вĕçрĕм унта сунар кăйкăрĕ пек,
Лекрĕм тӳрех читлĕхе.

Хĕр-пикен куçĕ йăл-йăл çиçет,
Вутлантарса чĕреме.
Пулчĕ çителĕклĕ пĕр хĕлхем çеç
Ман чĕрене тивертме.

Ăшшăн йăл культăн, каларăн йăлтах
Хăвăн хитре куçупа:
Кĕнĕ эс манăн чуна тахçанах,
Мăшăрлă пулччĕ манпа.

* * *

Тавра ем-ешĕл, çеçкере ман сад,
Юнра адреналин вĕрет хăватлăн.
Манран ыйтсамăр халĕ, иçмасса:
Миçе çулта эп? Сассăм ма ынатлă?

Яш-кĕрĕм хушшинче тахçантанпах
Эп ытлашши... чĕрем çаплах хĕлхемлĕ.
Ма хыптарса ярать юна вутпа
Хĕрупраçри ытарайми илемлĕх?

Вăй-шайлă пулнă çамрăк чух. Ак халь
Мана нимскер те кирлĕ мар, çапах та
Çуркуннерен ерет чуна хавха.
(Пур ӳсĕмре те юрату пурах-тăр.)

Ма тиврĕ-ши нумайăшне савма?
Ма вăрăм-ши юратăвăн кунçулĕ?
Ах, чунăм пĕлменнишĕн ватăлма
Мана ялан вăтанмалла-ши пулĕ?

Янк ирĕк, канлĕ пурăнма пĕрне
Чăрмантаратăп мар-и эп капашсăр.
Чăнах, такамăн çамрăк ĕмĕрне
Тăвăрлатать пек манăн вăрăм яшлăх.

Сĕрме купăс сасси

Шăпланнă ял çийĕн, кĕре тӳпе айĕн
Таçта янăрать сĕрме купăс сасси.
Кĕтмен хыпарпа шухăша халĕ кайнăн
Тăнлать пек ăна каçăхсах вăткасси,

Епле çак хитре кĕвĕрен рехет курмăн,—
Ишетĕн ачаш килнӳ кӳллинче.
Анчах мĕн çинчен-ха юрлать сĕрме купăс
Çак çăлтăрсăр каçăн тӳпи айĕнче?..

Юрлать вăл çапла: «Юрату, эс курсамччĕ—
Çынсем, йывăç-курăк, çуртсем — мĕн пурри
Пĕр тухăçлăн мар-и çунаççĕ?! Уçсамччĕ
Часрах алăкна шурăмпуçлăн яри!

Итле, Юрату! Чĕререн тархаслатпăр!»
Тăнлать юрату сĕмлĕхре халь пире.
Эппин сĕрме купăс нихçан ан шăплантăр,
Кунта та, лере те — шупка инçетре.

Чечекпе пыл хурчĕ

Çурхи ем-ешĕл тĕмĕ хушшинче
Чуна астармăш шеп чечек-ши курчĕ —
Илемлĕхĕн пылак танатинче
Пуç çухатас пек явăнать пыл хурчĕ.

Кĕçех ларса нектар ĕçес пекех,
Пĕр сулăм çеç — çеçке çинче пыл хурчĕ.
Ай, çывăхне пыма май çук иккен,
Йĕпсен чăтлăхĕнче чечекĕн çурчĕ.

Çут сывлăмăн асамĕн ӳсĕртсе
Вут куçĕ пек йăлкăшакан чечекĕм,
Ма суккăрла ларатăн хĕсĕнсе?
Курсам, тĕнче сăну пекех чеченкĕ.

Анчах та сансăр çав тĕнче кичем
Пыл хурчĕшĕн — çеçкеллĕ çуркунне те.
Пĕр сыпкăм чун уççи сим пылшăн çеç
Пама вăл хатĕр хăйĕн пурнăçне те.

Эппин эс ан пытан йĕпсем хыçне
Темскер çухатасран шикленнĕ евĕр.
Ай, ан кĕтсем пыл хурчĕн кăкăрне
Хура йĕпсем яш тиресçе шеллевсĕр.

Чун ялан ешертĕр

Шăнкăрти çур шывĕ,
Çĕмĕрт шур сĕтре.
Çамрăксем чечек пек
Ку чухне хитре.

Чунăм çунатланнă,
Вĕç — вĕçес тесен.
Савнă тус çумра чух
Вăл кĕсле иккен.

Юл, илемлĕ ĕмĕт.
Шанчăк, ан чаксам.
Чун ялан ешертĕр
Шур çеçке çурса.

Шăнкăрти çур шывĕ,
Çĕмĕрт шур сĕтре.
Çамрăксем чечек пек
Ку чухне хитре.

Парнелĕх юрă

Ешĕлех ялта,
Улах вырăнта
Пулчĕ çĕрĕпех
Каччă сар хĕрпе.

Вăл сĕмсĕрленмест,
Ытлашши чĕнмест,
Каласать сăпай
Куçпа савнă май.

Каччăн шухăшне,
Чечен кăмăлне
Ялти шухă хĕр
Туйса илчĕ-тĕр.

Çавăншăн хăйса
Пачĕ юрласа
Чĕре юррине
Чунĕ савнине.

Шурă-кĕрен чечексем

Ман ĕмĕтпи,
Кĕрен чечек
Сана парас килет.
Аса илер унпа пĕрле
Хитре çуркуннене,
Тин симĕсленнĕ хурăнсар шавне.

Ман шанăçпи,
Шап-шур чечек
Сана парас килет.
Аса илер унпа пĕрле
Çап-çамрăк пулнине,
Пĕри тепринчĕн лăпкăн çуннине.

Ман пикемпи,
Хĕрлĕ чечек
Сана эп парас çук.
Кураймăн чĕр çеçкеллĕ çур
Эс ун кăварĕнче,
Хĕрӳленсе пуçна çухатăн çеç.

* * *

Çĕнĕ çулăн пуçламăш — кăрлач.
Ылмашса çеç çанталăк тăрать:
Янк уярччĕ ĕнер кăнтăрла,
Паян, ав, çил-тăман урмăшать.
Эпир иккĕн пĕрле, пĕр çĕрте,—
Ыткăнать шурă тинĕс хирте.

Савнă тусăм, эс ман ытамра.
Кĕлеткӳ камин евĕр вĕри.
Астăрах çил-тăман таврара,
Ăшра çуннă чух вут сивĕ-и,—
Ăшă, ăшă мана эс пуртан,
Нихăçан куç эп илмĕп санран.

Паянхи пек, ыран та çаплах
Сив юр çаптăр питрен тăтăшах.
Кунĕ пулĕ çиллес, эс çапах
Çывăхланăн манпа хытăрах.
Çук санран çĕр çинче илемли,
Эп санпа пуринчен телейли.

* * *

Мĕн тӳрĕпе-ши эс каллех кунта?
Çурхи çеçке пек илĕртсе тăратăн.
Пĕлесчĕ сан, темме-çке эс пуртан
Хама эп выçă чĕрчунла туятăп.

Эс çамрăк-ха, тин сарăлнă кăна.
Çине-çине сĕлекене çăтатăп.
Тытса чаран тăлла самантранах
Ăшри вут-çулăм татасран хăратăп.

Хутте хăçан, мана эс хăнăхсан,
Пусса илсессĕн юрату пушарĕ,
Сан урусем умне ӳкесчĕ ман...
Кам ун чухне мана чарма пултарĕ?

* * *

— Пăрăн çул çинчен
Халех,
Яланлăхах.
Пăр капланăвĕ —
Пулни —
Ванса васкавлăн ирĕлтĕр
Чунăмра,
Кайран-малтан
Сĕвĕрĕлсе кайтăр асăмран.
Пăрăн.
Пĕр минут та,
Пĕр çеккунт та
Курма кăмăл çук тек...
Икĕ йĕр юппи çине
Тăман
Йĕкĕр ывăçпа сапать юр пĕрчисем.
Çуртсем çийĕн:
Чак-чак...
Чак-чак...—
Курни-илтнине йăлт
Ял çине сарасшăн,
Чаклатса хытах
Вĕçтерчĕ
Пĕр чакак.

* * *

Эс ман пурнăçа виçсе хаклаймăн.
Санпа çитнĕ
Тӳпене тек çĕкленме
Пултараймăп, халĕ тин хăват тупаймăп
Эпĕ унăн чăнкине çĕнме.

Чун юрлатчĕ, савăкчĕ...
Хитре яту та
Çут хĕвел пекехчĕ чĕрере.
Ир тивсе ăна хуратрĕ тутăх...
Иртерех сивлерĕн, иртерех.

* * *

Кил хĕвелĕ пулса чунăма
Ма пĕлмерĕн, савни, ăшăтма?

Эс таса çурталла тĕлкĕшни
Ху тусна тивĕçет терĕн-и?

Сан ăшшусăр мана шĕкĕлчет
Çак хаяр та илемлĕ тĕнче.
Эс çавна туйманран чун йĕрет,
Пăр капламĕ — салху чĕрере.

Лĕпĕш пек, кăвайту тавралла,
Ман шăпам çаврăнинччĕ ялан.
Ятăма кăларса манăçа,
Ан ӳкер пĕчĕкçеç шанăçа.

* * *

«Савать-и, савмасть-и» текен чечекпе
Тин çеç ятăм юмăç пекки.
Юлайрĕ пĕр мăшăр шап-шур çеçкепе
Йăлт татнă сап-сарă чашки.

Телейлĕ çын эпĕ! Çак çут тĕнчере
Пурах-мĕн мана саван чун.
Çемçен те асаплăн сикет-çке чĕрем,
Вутпа хыпса илчĕ чĕр юн.

Пулассăм килмест халĕ ман арçури.
Савни куç умне тухасса
Кĕтсе тăракан хĕр пуласчĕ юри.
Вăл ятăр пуçа çавăрса.

* * *

Çуркунне çӳçенчĕ
Ир-каç сивĕпе,
Çавăншăн пĕркенчĕ
Кăчкă çăмĕпе.

Эй, эс, çуркуннеçĕм,
Кăшт тăхта, тăхта.
Ăшă сивве леçĕ
Инçете кунтан.

Юр уйра çухалĕ,
Килĕ ешĕл çу...
Ман ăшра çеç халĕ
Ăшă туйăм çук.

Мĕншĕнне пĕлмерĕм,
Юлăп-ши хăрах?
Кам-ши ирĕлтерĕ
Ман чунри пăра?

* * *

— Атте, мана сутрăн-и?
Сутрăн-и те пуйрăн-и?—
Пулнă çапла хĕр йĕрри,
Вутлă куççуль пек юрри.

Халь урăхла йĕркесем:
Ячĕшĕн çеç çĕн кинсем
Пулĕç туйра йĕренçи,
Салтмĕç макра хутаççи.

Ма кулянас çав тери,
Ирттĕр, ара, хĕр ĕмри.
Сар упăшка — юратни,
Курас телей — пĕрлешни.

...— Атте, мана сутрăн-и?
Сутрăн-и те пуйрăн-и?—
Пулнă авал хĕр йĕрри,
Вутлă куççуль пек юрри.

* * *

Яш ĕмĕрĕм кĕнекине хĕрсех
Вула-вула эп ун вĕçне те çитрĕм.
Кам пĕлнĕ вăл пит час вĕçленессе?
Хаваслă вăхăтсем пуçпулчĕç — иртрĕç.

Эй, кайăк-яшлăх! Кайрăн эс вĕçсе.
Çĕн улăх шыраса, хурланчăк — юлчĕ...
— Кил, çамрăклăхăм, каялла!— тесен,
Манран сухаллă ватлăх ăшшăн кулчĕ.

Кăмăла уçса пани

(хĕр çырăвĕ)

Çамрăк чунăма эп вут хыптартăм,
Пĕр кĕтмен çĕртен сана курса.
Кунĕн-çĕрĕн, мĕскĕн, асаплантăм,
Тулăксăр юратупа çунса.

Ун чухне хĕвел ачашшăн сӳнчĕ,
Уйăх çутрĕ хунарне çĕрле,
Алтăр çăлтăр ерипен ал сулчĕ,—
Курчĕç пурте — эп санпа пĕрле.

Çурăлнă сирень чечекĕ евĕр
Йăл куллу çутатрĕ шăплăха.
Пилĕкĕм çинчи аллун чĕтревĕ
Ăшшăн туртса кĕчĕ ырлăха.

Çăлтăрсен картиллĕ хӳхĕм вăйă
Тыткăнларĕ тĕпсĕр уçлăхра...
Вутлă куçусен асамлă вăйĕ
Ирĕлтерчĕ чĕреме вăрах.

Пĕр-пĕрне халь сайран çеç курсан та,
Юратма сана эп пăрахман.
Палăртма çавна хальччен вăтантăм,
Çитменне тата — çăвар уçман...

Ĕмĕтсем çĕнрен çеçке çураççĕ
Куç умне сăнна кăларнăçем.
Пĕл, савнисĕр-туссăр пурнаймаççĕ
Пĕве кĕнĕ пикесем-хĕрсем.

Тен, сана савма эп тивĕç мар-тăр,
Мĕн тăвас, чĕрем çапла хушать.
Çунатне сарса (ăна кам чартăр!)
Кăмăл сан патнах-çке ыткăнать.

Ан выля чунпа

Ачаш çил мана илчĕ ытамне,
Ыррăн пăлхатса çепĕç чĕрене.
Юмахри пекех кĕçĕрхи тĕнче,
Йăлтăр кулă пур сан сăну çинче.

Çакă çурхи каç çĕмĕрт айĕнче,
Çамрăк çеçкесен шур ытамĕнче,
Пăшăлтатрăн эс ăшшăн, именсе
Чи пирвайхи хут: «Юратап...»— тесе

Вут пек пĕçерсе кайрĕ чун-чĕрем,
Хыпрĕ ĕмĕре кăкăрта хĕлхем.
Турăн эс тупа мана çеç савма,
Ятăн çавăрса çамрăк пуçăма.

Иртрĕç унтанпа канăçсăр кунсем.
Çĕмĕрт те каллех çурчĕ çеçкесем.
Анчах эсĕ çук халиччен манпа,
Мĕншĕн хăйрăн-ши выляма чунпа?

Шанчăкăм халĕ те сывлăхлă,
Пурнăçăм — ĕмĕтлĕ.
Маншăн çăтмах пекех ырлăхчĕ
Шур сĕтри çĕмĕртлĕх.

Шăпчăк юрри унта тулнăччĕ,
Пурччĕ чун анлăшĕ.
Эп çавăнта тăрса юлнăччĕ
Тăлăхçă акăшăн.

Эсĕ телей кӳме хатĕрччĕ
Куйкăрăш кайăк пек.
Сан ытаму мана халĕччĕ,
Çук-çке ман айăпăм.

Манаймарăм сăнна

Илĕртетчĕ тухăç тĕлкĕшни,
Килĕшетчĕ иккĕн çӳрени.
Ман таса юратăва эс мĕншĕн-ши
Таптаса хуратрăн, чун савни?

Пурăнас килетчĕ çĕр çинче
Ман санпа мĕн вилĕм çитиччен.
Кайрăн та çухалтăн эсĕ хăв пĕччен,
Манаймарăм çеç еăнна хальччен.

Эп кĕтетĕп пĕр сана кăна,
Сансăр кансĕр тĕнчере мана.
Чун-чĕрем пĕр хĕлĕхсĕр кĕсле майлаҳ
Нăйкăшать салху кашни кунах.

Сансăр эп тупайăп-ши хавха?
Курăк та хĕвелсĕр сарăхать.
Эсĕ эп тăр пĕчченне сисетĕн-ши?
Кил, сирсемччĕ шелсĕр тунсăха.

* * *

Юратуллă ялăма хупларĕ
Хăрăм тĕслĕ ашăк евĕр каç.
Чĕреме ачашшăн çупăрларĕ
Çамрăксен куллиллĕ пирĕн кас.

Лăм та çукчĕ — варкăш çил хускалчĕ,
Пĕлĕт кăвакарчĕ мал енчен,
Ав, Хуркайăк Çулĕ те шупкалчĕ,
Савнипе эп пултăм шуçăмччен..

Кăлăхах çунмастăн-ши хальхаççăн,
Çамрăк та черченкĕ хĕр чĕри?
Савас сунăм пур-и,— эс ан каçăх.
Чăн илем — сăпайлăху пурри.

Шăрăх пушхирти таса çăлкуçăн
Вăй парса тăрать Вăл ман чуна.
Пĕртен-пĕрĕм, куçăма эс уçрăн,
Эп халь тин çуралнăн туйăнать.

Санпала тĕл пуличчен, савниçĕм —
Уйăх çутине асăрхаман,
Хĕвеле туйман.
(Çитмен-тĕр сисĕм.)
Юрату хĕвелĕ эсĕ ман.

Самана тусанĕн йĕрĕ

Сехет шаккать...

Тĕпелте тахçанхи кив сехет
Пĕр манерлĕн шаккать тĕттĕмре.
Капланса тĕрлĕ шухăш килет,
Хускалать тем çитмен пек чĕре.

Вăхăт — пиçĕ ват тимĕрçĕ пек,
Султанпа ислетсе иртнине,

Кирлĕ, кирлĕ мара пĕтĕмпех
Вĕртерсе кăларать тул енне.

Пурнăç йĕрĕсем çеç, е тата
Çук патшалăхăн хăш паллисем
Юлаяççĕ çĕнсе вăхăта...
Çавсем мар-и музей стенчĕсем?

Мĕн тери нăкă хутăш! Унта
Курăн тĕрлĕ тăм савăт эс, е
Тăхасем, сăнă вĕçĕ... тата
Чулланса ларнă хуçăк кистен.

Вăхăт — пурнăç çӳпне пухакан
Савăт мар-ши?— шутлатăн текех.
Харона ĕненсен, çавнашкал
Савăт тĕпĕ — субстанци иккен.

Ак çын кайрĕ те — нимĕн те çук.
Ăçта вилĕмсĕр чун? Шухăшсем
Авăртса хĕрсе кайнă пуçу
Мимене çеç ярать пиçтерсе...

Мĕскĕн тĕттĕмлĕх!
Пурнăç кĕви
Чи телейлĕскере те çиет.
Ун — художникăн çеç — чун хевти
Вăхăтпа тупăшмашкăн çитет.

Тĕпелте тахçанхи кив сехет
Пĕр манерлĕн шаккать тĕттĕмре.
...Ак пĕр чĕлпĕк — пулни — халлĕхе
Вĕçсе ӳкрĕ ума çĕнĕрен.

* * *

Сентре ал лексе сулланчĕ.
Тин çунă юман урайне
Ӳксе тăм чӳлмек арканчĕ,
Самай хăпартса сехрене.
Ӳксе тăм чӳлмек арканчĕ...
— Эс пулăн ман евĕр кайран,—
Теет пек
Кашни-пĕр ванчăк.
Сивлек,
Шелсĕр чăнлăх пуртан.

* * *

Шăрпăк çутрăм тĕттĕм пӳлĕмре.
Унăн ĕмĕрĕ минут та çук-мĕн.
Ах, мĕне-ши ĕненсе пĕрех
Çунатне çапсах ташларĕ çулăм?

Эп илтсеттĕм çакăн пек юмах:
Кирлĕ мар вилсен нимскер те ӳлĕм.
Те вăл тĕрĕс, ге суя сăмах,—
Ялтлатса илет этем кунçулĕ.

* * *

Тĕнчемĕр темшĕн юлчĕ пушанса.
Пуш сăмахпа çав пушăлăх тулать-и?
Вăл тулаймасть ĕç вырăнсăр пулсан,
Чăн никĕссемсĕр те çаплах юлать-тăр.

Пуш-пуш тĕнче!
Епле чĕлхе вĕçне
Вăл урăхла килейтĕр! Курăр, эпĕр
Çĕтсе çӳрен чун-чĕмĕн керменне
Пур-çук укçапалан-çке тĕреклетпĕр.

Лере вара сĕм тĕттĕм те улах.
Чĕре çинче — кичемлĕх хунă пуслăх.
Чун чӳнланса çитейменне пула
Ун хĕлхемне кĕç сӳнтерес пек пушлăх.

* * *

Çырмасем тискеррĕн курăнаççĕ
Вĕçĕм шывĕ типнĕ вăхăтра.
Вутăшсем те вĕсенчен тараççĕ.
Чун-чĕрем хӳхлет-çке кăкăрта.

Çырмапа çын чун-чĕри пĕр евĕр
Куçкĕрет типме пултарнăран.
Çын пуçтахлăхне-мĕн тӳсеймесĕр
Юханшыв чакса пырать шывран.

Чун ăшăхланни шутлаттарсан та,
Тупсăмĕ ăçта — епле калам?
Куншăн мĕнпурне айăпласан та,
Пур çынра, пур вăрттăн япала!

Ёмёте вёчёрхенсе хăртатпăр,
Йăлана пĕлместпĕр упрама.
Ах, мĕн-ма хăш чух пулатпăр латсăр,
Çын чĕри — ахаль ăшăхланмасть.

* * *

Пăсăлсах пыратпăр ку чухне...
Нӳрĕ кĕтесри пăнтăх килĕшмĕ.
Шуйхашатпăр шеп малаш çинчен,
Пуласси ырă килĕ-ши?

Чун керменĕ хупă та сивлек,
Пушăран никĕс çĕресшĕн.
Пăрахатпăр эпĕр тĕп киле,
Ёмĕре ютра ёмĕрлесшĕн.

Юратӳ çуратнă ангелсем —
Эпĕр —
Аслă Турăна вĕлернĕ.
Пĕл,
Сана шыратпăр халь, Этем,
Касăттăм та тĕплĕттĕм, тенĕн.

* * *

Тавралăхăм ялтăртататчĕ
Хĕвеллĕрен, çуркуннерен...
Ман паталла пике утатчĕ
Аякранах кулса хитрен.

Хавас самант! Ак шухăшларăм
Тем йӳтĕмпе кунçул çинчен.
Шутларăм та — йăлтах çухатрăм:
Йӳçекĕ те кунтах иккен.

Ма хăратать килес кун ирĕ?
Чун сӳ! тăвать кĕтме тăрсан.
Е эпĕ халь чăнах та чирлĕ,
Мĕн курăп чир шала кайсан?

* * *

Пире пĕрмай çĕн çул хывма хистерĕç
Ниме пăхмасăр çут ыраналла.
Мĕлке пек пирĕнпе пĕрле çӳрерĕ
Хура хăюллă хĕрлемес ялав.

Ма пирĕнтен пĕрре те вăл хăпмарĕ?
Пуҫсемĕр ҫийĕн вĕлкĕшрĕ кăра.
Ай, витĕрех-ҫке юнлă хĕм хăмачĕ,
Ун анĕнче эп вилесем курап...

...Пĕрвĕҫĕм ҫĕнĕрен валеҫрĕҫ уссăр
Ку ĕмĕрте ҫĕре, влаҫа, мула.
Валеҫӳҫем иртмерĕҫ ҫухатусăр,
Юнпа кăна-ши ĕҫ тăп-тăп пулать?

Чыса-и тивĕҫ апăрша ялавĕ.
Чим: халăхăм ҫукпа, ав, тертленет.
Ун мăйĕнчи хура хăю-пăявĕ
Кĕрешĕве тухмашкăн хĕтĕртет.

* * *

Ывăннипе кĕҫ тӳнсе каясла ĕҫлесессĕн,
Йăлт пурнăҫланĕ, вăй ҫеҫ ҫитерме ҫăмăл мар.
Туртăннă, ав, шăнăрсем татăлса сирпĕнессĕн:
Сăхăм лаша сĕтĕрет мăн лава хĕнсĕр мар.

Чĕр асапа паттăрла шăл сыртса тӳсейсессĕн,
Ҫăлăн эс хăв пурнăҫна пулмасан та — чысна.
Чуниллисем сан ҫине пăхса тăрĕҫ ҫиллессĕн
Ним тăваймасăр,
Ултав та витеймĕ чунна.

Хăрăм пек каҫĕ анса таврана хупласассăн
Шан ҫав тери сĕмлĕхре ялтăр ҫутнă ҫутта.
Куҫ шăрҫине хӳтĕленĕн упра шанăҫа та —
Ҫулăм ҫинче, тĕрмере, пăталанă ҫĕрте.

Ҫакă чĕрем халалне пăхăнса ҫӳллен утрăм
Ку таранччен эп, анчах халь ăҫтан-ши тупам
Тӳсĕмлĕх, вăй, ĕненӳ ҫĕнĕрен хăть шит ҫурă
Танлăн утмашкăн каллех унччен пек ҫулпа.

* * *

Арканаканĕ — тĕнче мар — чуралăх!
Кашни-пĕр ванчăк ҫеҫкене ларсан,
Ҫĕн ҫураҫуллă килĕшӳ ҫуралĕ..

ПЕТĔР ЯККУСЕН

Кăмăллă эп: ҫын чунне хытарса
Вĕҫĕм тӳсни харама кайманнишĕн,
Тĕрлĕ чуралăх ванса аркансан,
Ҫутă тĕнчен ар вулли хăрманнишĕн.

Ишĕлчĕк, çĕмрĕк хуппи-хушшинче
Ав, хунавсем çĕнĕрен ешереççĕ.
Çуркуннепе юрату умĕнче
Ăшăхлану кунĕсем çĕтĕлеççĕ.

Кунĕленмен-ха синкерлĕ çилсем,
Шав явăнать-ха çав ăмăрт-çăханĕ.
Эс юлашки сăмахна каласам,
Килĕшӳпе çураçулăхăн ханĕ.

Эп—хам тĕнче

Эп — тĕнчере, тĕнче — ман ăшăмра.
ЭНТИП ВАÇÇИ

Эп — хам тĕнче. Манра — пулни-иртни:
Килĕшĕве килменнисен вăрçи те
Виле çынсем... тата чĕр юнлă çитĕ,
Ун айĕнче — çынсен асап сăнни.

Çаксем йăлтах манра, ак çак чунра:
Батый, Колчак та Гитлер... (Пурте—аслă!?)
Иртнишĕн килтĕр тăнăçлă пуласлăх,
Тăкасшăн уншăн эпĕ хам тара.

Пур ĕмĕрсен хаяр вут-çулăмне
Ялан ăшра тытма, паллах, асаплă.
...Татулăхпа улăштарать ас, авă,
Асаттесен хĕрӳ кĕрешĕвне.

Пуçсем çинче ан ашкăнтăрччĕ хĕç,
Пире çыхса тăринччĕ çирĕп туслăх.
Ĕçре пĕрлешĕнсе кӳрер-ха усă
Пĕрне-пĕри.
Хĕв-шухăшăм — çав ĕç!

* * *

Вăрманта çĕтсессĕн, пыр çурасла кăшкăр,
Пурпĕр шавкăн витĕр илтмĕç сассуна.
Вăранса çил тухĕ, вĕрĕ вăштăр-вăштăр,
Хăйĕн хĕвне хупĕ сан тăрмашăвна.

Чăнлăх, чунлăх, çынлăх таврара çуках-тăк,
Эсĕ тупăш, хирĕç ватă турăпа,

Уйрăм курăк евĕр, пусăри пучах пек,
Никамах та илтмĕ сассуна çапах.

Канăçусăр тăлăх сасă сассăр йăмĕ:
Уй-хирти пучахăн... курăкăн та çав...
Сан сассу та куçĕ, çул шыравçă йĕкĕт,
Пур саспа пĕрпеккĕн хĕнлĕ тăнăçа.

* * *

Тикĕс,
Питех те тикĕс.
Нимле тумхах-чăрмав та çук.
Чăрмавсăрлăх вăл — ырлăх-ши?
Е çур пуса тăманлăх.
Ма чун савусăр?
Нивушлĕ кирлĕ чăрмавсем?
Тикĕс,
Яка та тикĕс.
Çук, çук, эп чăрмавсем тӳсем,
Тумхахсенчен те такăнам.
Ӳкем —
Тăрам,
Сирме умри чăрмавлăха
Эп вĕренем.
Тулли те пуянрах — пĕлсем —
Пулать ун чух этем.

* * *

Эп хам сăнра пин-пин çынна курасшăн.
Пĕлетĕп: пĕрлĕх пур! Анчах — ăçта?
Калатăп халь: Анланăр-ха, тархасшăн.
Калаттăмччĕ малтан эп: Ах, шуйттан!

Хăш çын алхапăл шанăçа кĕресшĕн,
Сивлет чĕрем ытла васканине.
Эп ют чуна çиелтен мар пĕлесшĕн
(Мĕн çиттĕр тинкерӳллĕ пулнине.)

Тӳлеккĕн итлеме эп вĕренетĕп
Тата çирĕплетмесĕр каласма.
Сăрлаççĕ сăмахпа халь тӳпене те:
Сăмахăм ман чĕнет тăванлашма.

Тĕрĕссипе — сăмах тени вăл маншăн
Чĕр туйăмлă чĕреллĕ çилçунат.
Унпа кăна эп çул тупма тăрмашăп
Тĕллев патне.
...Чун юлташне шырать.

Тăрмашу

Каллех тăрмашсах эп силлетĕп
Ман шанчăкăн чĕр вуллине.
Ăçта кĕтнĕ çимĕç? Пĕлместĕп
Хальччен те эп ун тутине.

Епле çын тупайтăр-ха çакă
Сĕм-тĕттĕмлĕхре хăй çулне?
Куратăп: пурнатăп эп тăкăс,
Çакланнăн салху тĕрмене.

Кун пек пурăнса мана çитĕ.
Эй, уйăхăм,— Уйăхпилли —
Яр çутă! Тухасчĕ Сĕм витĕр
Айван çутăпа та пулин.

* * *

Чуна деспот теме те пулать.
Вăл кашни утăмрах пусмăрлать.
Вăл хатарлăн йăшкать ӳт-пӳре.
Ĕнтĕ тӳсĕм епле çитерем.
Мĕншĕн, мĕншĕн эп пур тĕнчере?
Хăвармашкăн пур-çук еткере
Тупас çук-тăк вăй-хал чĕрере.

* * *

Чун-чĕрем!
Каçарсамччĕ тархасшăн мана,
Мухтамалăх пуртан мухтама юратманшăн:
Халиччен шухăшра та ниҫçан эп сана
Юратса ăш сăмах калайманшăн.

Тĕлĕнетĕп,
Нимпе ăнкартмастăп çавна:
Хĕвĕнтерчĕç сив юр ман ăша çу та, кĕр те,
Вĕчче пĕлтĕм хĕнре, çав-çавах эп сана
Тарăхса та курман-çке-ха пĕртте.

Чун-чĕрем!
Ан ятлаччĕ тархасшăн мана,
Савăк мар шăпама ĕненсе хыт шаннишĕн,
Çавăнпах-тăр кунччен чăннипех те сана
Эп нимскер вырăнне хуманнишĕн.

* * *

Кил хушшинче авăтать автан,
Кăвак çутăллах чĕнсе таçта.
Хăйĕн сасси салхун, салхун тухать...
Шуçăм вутлăн-хĕмлĕн умра çунать.

«Ун тĕкĕрне сăнама ан ман,—
Чĕнсе авăтать чăпар автан.—
Каçăн мĕлки çеç унта юлнă ав,
Каç иртнине эс сисейрĕн-и çав».

Хура каçсенче эп хуп туртса,
Сар кунсемпе çырлахас пулсан,
Пулăп-и сумлă ман ватлăх çитсен?
Ят-шыв илесси — ялан ĕçлесен.

Каçĕ те, кун та маншăн паха.
Ма вĕсене çынна пӳрнĕ сахал?
Тĕлĕк пек хăвăрт вĕсем иртнĕçем,
Ручка тытма та хал юлмĕ кĕçех.

* * *

Ыр çынтан ырлăх,
усаллинчен — шырлăх.

Эй, пурнăç!
Телей курма сахалтарах тивсен те
Тумхахлă сан çулу çинче мана,
Ан тив, чулпа ура лаппи вистентĕр,—
Эс ан усаллантар йăваш чуна.

Чунра ман тăтăр хĕмленсе сăпайлăх,
Тулса каплантăр ĕмĕр ырри çеç.
Çак хак пами ăшри мĕнпур пуянлăх,
Унпа анчах эп юлмăп кĕлмĕçе.

Енчен такам асап-инкек курсассăн,
Хӳхлет алри хуткупăсăм салху.
Йăпатăп эп çынна, йĕрес пулсассăн,
Анчах ăна нихçан та тумăп хур.

Куçкĕски умĕнче

Пĕр енĕ — тĕттĕмлĕх, тепри — хĕвеллĕх.
Çут енĕ пăхтарать çав хăй çине.
Унта — ман типшĕм сăнăм.
Вăл — кивелнĕ.
Сăнра курас пек эп курманнине.

Çĕн тарăн йĕрсене курсан, хурлантăм.
Вăтантăм шуралнишĕн йĕпкĕн çӳç.
Анчах та,
Ача мар та,
Тин ăнлантăм:
Хăвна пĕтĕмĕшпех курма май çук.

Мучие

Ват пуçупа кăптăркаса кайсан,
Хура тĕсне ярса та çухатса,
Çӳçӳ кăвакарсан, сайралансан,
Хăвна кăшт юсани те пит аванччĕ.

Анчах мĕскер пытарăн сăрланса,
Е кăшт унтан-кунтан юсавланса?
Сан чун керменĕ кивĕ, астусам,—
Каштасене те вăхăт çĕртнĕ ĕнтĕ.

Халь-халь тухса ӳкес пек савăлсем,
Пĕр аршăн путса кĕнĕ юпасем,
Шпалер уйăрăлать чĕлтĕртетсе...
(Çавна кура ман чунăм та шуйханчăк)

Шăпи çапла-тăр. Ĕмĕрлĕххи — çук.
Куна хупсан, чун тупĕ урăх çурт.
Çав пурпĕр пулмалли вĕр-çĕнĕ пӳрт
Мĕнли?
Чуну вăр-вăр тăвать пуль хĕнлĕн.

* * *

Кӑнтӑрла та, каҫхине те вутлӑ
Сыншӑн ҫунаканӑн ӑшчикки.
Ҫавӑн пек ҫав пурнӑҫӑн йӗрки:
Пушхирте хунавлӑх янӑ вулӑ
Пурнӑҫа туять кӗрешӳре,
Тертлӗхре ҫеҫ туптанать чӗре.

* * *

Хрусталь-кавирлӗ пӳрт ӑшчиккинче
Ман чун пыл хурчӗ евӗр шуйханать.
Тулта лӗп ҫил ҫан-ҫурӑма лӑпкать,—
Анчах эп пӑлхану тыткӑнӗнчех.

Самант тупса масар ҫине килсен,
Хама туятӑп эпӗ лӑпкӑ, канлӗ.
Аса илсе те шухӑша ӳксе
Пуҫа вататӑп. Ҫам-ши тӳррӗн калӗ:
Мӗскершӗн харсӑр пурӑнмасть кашни?
Ма хӑратать леш тӗнчене кайни?
Е эпӗр хӑрава-ши ерсе кайнӑ?

Ав, кайӑк шӑратать хӑй юррине.
Чунсем ӑҫта, мӗнле пурӑннине
Вилесене калать пек пӗчӗк кайӑк.

* * *

Кумаҫҫӗ урампа ҫынсем.
Нумай-ҫке эпӗ паллани.
Ёҫ кунӗ тин вӗҫленнӗҫем
Васкаҫҫӗ таҫталла кашни.

Ак яш строительсен ҫулне
Чикан хӗрарӑмӗ пӳлет.
Ҫам хапӑллать, ун шӑпине
Вӑл ҫавӑнтах пӑхма тӗллет.

— Куратӑп пысӑк улшӑну,—
Тет, ак, илсе пӗрин алне.
Хӗвеллӗ имӗш каччӑн ум,
Телей кӗрет кӗҫех килне.

Анчах телей мĕн иккенне
Яшсем пĕлеççĕ. Ыранах —
Тусанлă ĕç çине-çине...
Хӳтерчĕç юмăça часах.

Ултавçа

Вĕчĕрхӳллĕ сив суя сăмахăн
Ĕмĕрĕ —
Ирхи тĕтреннилле —
Вăрăм мар, ури уксах ултавăн.
Çакă чăнлăха кашни пĕлет.

Суяпа та ултавпа çеç эсĕ
Хăнăхтартăн пурăнма хăвна.
Пурăнатăнах-ши?
Сан пĕлесчĕ:
Вилнĕ эсĕ, илнĕ мур чунна.

* * *

Хам асăмран ăçта тарса каяйăп?
Иртни патне епле çула пӳлес?
Асрах: мĕнре-ши пулнă пирĕн айăп?—
Час-час тиветчĕ пăрахма киле.

Юр хӳсе лартнă çул. Резина атă.
Ют çын хапхи. Ун умĕнче — анне.
Тата хӳхлев: «Тархасласа ыйтатăп,
Кĕртсемĕр çĕр каçма мĕскĕнсене».

Çуралнă килĕн вучаххи сӳннишĕн,
Чăхăмланишĕн ман чĕре таппи,
Анне куççулĕшĕн, асап тӳснишĕн
Кăклантăр ĕçкĕн шăршлă кăвапи!

Юрлатăп юрă, чун кӳтсе килсен

Инкек-синкек танатине лексессĕн,
Ăшчик хыпса çунан самантсенче,
Табак туртмашкăн, тен, вĕренĕн эсĕ,—
Тесе мана каларĕç пĕрреччен.

...Иртни сахал-и сурансем хăварчĕ,—
Выҫса ҫитсен те ҫитлĕн ҫиеймен,
Ман пӳ ҫинче питтисĕр пир тумтирччĕ,—
Мĕн чухлĕ вăтанман, шăнса кӳтмен.

Анне хуйхи мĕн ачаран ҫунтарчĕ
Ман чĕрене вутпа ҫине-ҫинех.
Ман ҫамрăклăх ачаш шăпаллă марччĕ,—
Пирус хыпмарăм ҫăвара пĕрех.

Ăшчик хыпса ҫунан самант ҫитсессĕн,
Ăна эп канăҫлатăп ĕҫ-хĕлпе.
Юрлатăп юрă, чун кӳтсе килсессĕн,
Юрлап та — чунăмра хаваслă пек.

* * *

Вĕри ҫунатлă туйăмсен вĕҫевĕ
Ҫилхеллĕ ăшă ҫил лăпканăран,
Тем тĕрлĕ кайăксен оркестр евĕр
Сасси-чĕвви ăша сăрхăннăран.
Эс туйăм хыççăн кăлăх вăйкăнатăн,
Пуҫтарччĕ пĕрех хут пур туйăмна та,—
Ҫĕн сăвă-юрă вĕсенче вилмен,
Мĕнех, хăшне, тен, ҫуралма пӳрмен.

Туйăмсене хăваласа ҫитеймĕн —
Уҫ чĕрӳне — ҫитет айванланса,
Ҫак пурнăҫра тур панинчен иртеймĕн,
Пурне те хăява хăварайса...
Мĕн чухлĕ шухăш тĕнчене акман-тăр!
Анчах нихҫан та ҫын тени ан мантăр:
Вĕҫтернĕ вăрлăхăн ку ҫул-йĕрне
Таках сӳтсе явни, хăртни тинех.

Пит ăслă мăн асаттесем каланă:
— Мĕскер акан, ҫавна выран,— тесе.
Мĕн акнă, вăл виҫеллĕн калчаланĕ
Сан умăнта, ҫĕртен хăват илсе.
Чим, кайăксем халь урăхла юрлаççĕ?..
Сана та, авă, ăнланма уйлаççĕ,
Пултарĕҫ-ши ҫапах та ăнланма?
Пĕлместĕн пурнăҫра ларма-тăма.

Ăнланмалла мар сăмах

Турат çинче пур çулçă та ем-ешĕл,
Кашни кунта пĕрешкелех çавра.
Эп çак çулçа та çавраках теесшĕн,
Анчах, тытса пăхсан, вăл тăсăкрах.

Çак халăх та пĕрле кăна хура-мĕн,
Пĕрле пăхма çеç пурте пĕр сăнар.
Апла пулин те эс нихçан кураймăн
Çак ХАЛАХ сăмахра харкам çынна.

Ма халăха, эппин, çынсем теместпĕр?
Пăхса илер-ха пĕр-пĕрин çине:
Эп, эсĕ, вăл та — пурте çынсемех-тĕр.
Эп урăх ят параймăп вĕсене.

Туйăм-туртăм

Пурах хастарлăх чунăмра,
Пурах!
Шухăшăмсен вĕçне
Çитес-тухас шутпа
Çунатăп тухăç пек
Кашни килен кунах,
Чи пархатарлă та
Хăватлă çутăпа.

Тавах пуриншĕн те,
Сăваплă пурнăç!
Кунччен тем чул та
Ырлăхна эп курнă.
Çителĕклех
Эс патăн мĕнпурне:
Çурне,
Çут хĕвелне те
Çумăрне.

Эп вĕсене
Пурне те илнĕ кивçенле,
Анчах мĕн илнине
Ниçта та палăртман.
Йăлтах çырса пыни

Кирлех-шим пит элле.
Ман совеҫӗм ахаль
Нихҫан улталаман.

Енчен те кунăм
Кăлăхах иртсессӗн
Чакмасăр парăм,
Уссăр пурăнса,—
Сивлек ман чунăм.
Кун ҫути сӳнсессӗн,
Пӗр хӗрхенмесӗр
Канăҫа илет туртса.

Юлхав ача,
Уроксенчен юлса, класра
Хупăнса ларнăн,
Эп ларатăп аптраса.
Пăлханчăк чун
Пуҫлать кӗҫ вăркама вара.
Кăшт ҫеҫ вăл лăпкăрах
Пулинччӗ, иҫмасса.

Кичем, салху
Ҫӗр варринче пӗччен
Эп сӗмленетӗп хам ăшра
Пӗр хушă.
Ман ҫын ҫине
Тухасчӗ, пӗр тесен.
Анчах мӗнле питпе
Пӗр нимсӗр-мӗнсӗр
Эпӗ тухăп,
Куҫран куҫлăп
Пӗр вăтанмасăр,
Пӗр вăлтмасăр,
Пӗр хăравсăр
Тус-йышăма тӳрремӗнех
Ыранхи кун.
Хыт чунлине ку ҫынсенчен
Эс курмăн.
Вӗсемшӗн тӗмсӗлсе
Чӗреҫӗм, ҫун!

...Ашри сасса эп
Ак илтетӗп уҫҫăн:

— Çырма эс лар!—
Вара мĕн шуçăмччен
Пĕр пĕчченçи халь
Сарать сарă çутă
Сĕтел лампи
Ман ĕç пӳлĕмĕнче...

Тупмалли

Çăлкуç çути туртăмĕ

Вулакана 3
Çуралнă ялăма 4
Уй-хир варринче 5
Тăван тăрăхра 6
Сывпуллашу . . . . . —
Çĕршывăм 7
Çурçĕр çилне 10
Çăлкуç 11
Татăлми чĕп-чĕрĕ юхăм 14
Çурхи кăмăл 16
Ирхине 17
Хурăн . . . . . —
Утăра 19
Телейпе Эрлĕк хушшинче 20
Шурă эрĕм . . . . . —
Сиенлĕ тĕмĕ 21
Кĕркунне 22
Кĕрхи çил . . . . . —
Тăрна карти 23
Шăпасем 24
Çеçпĕл . . . . . —
Ăс 25

Пиçнĕ çырла техĕмĕ

Манăçми пике . . . . . —
Пулас марччĕ 26
Уйăхпи 27
Çул çинче 28
Çăлăнăççăрлăх 29
Хĕрупраç 30
Эс пăхатăн ман çине 31
Çурхи юрă 32
Сĕрме купăс сасси 33
Чечекпе пыл хурчĕ 34
Чун ялан ешертĕр . . . . . —
Парнелĕх юрă 35
Шурă-кĕрен чечексем . . . . . —
Кăмăла уçса пани 39
Ан выля чунпа 40
Манаймарăм сăнна 41

Самана тусанĕн йĕрĕ

Сехет шаккать 42
Эп хам тĕнче 47
Тăрмашу 49
Куçкĕски умĕнче 51
Мучче . . . . . —
Ултавçă 53
Юрлатăп юрă, чун кӳтсе килсен . . . . . —
Анланмалла мар сăмах 55
Туйăм-туртăм . . . . . —

СТАНИСЛАВ САТУР
(СТАНИСЛАВ НИКОЛАЕВИЧ НИКОНОРОВ)

Редактор **Р. В. САРПИ**
Худ. редактор **В. М. МИХАЙЛОВ**
Корректор **В. М. ШТРАНКИН**

СТРУНЫ СЕРДЦА

СТИХИ

На чувашском языке

Сдано в набор 15.03.1993 г. Подписано к печати 25.10.93. Формат 60×84 1/16. Объем 2,5 учет. изд. л. Заказ № 732. Тираж 1000 экз. Цена договорная. Типография № 1 Госкоминформпечати Чувашской Республики, 428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

1000 z